27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
29
ЫТЛАРИКУН
170(6665) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт атака тунине пула, августăн 27-мĕшĕнче нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсем пулса тăракан ФОКШАНЫ тата РЫМНИКУЛ СЭРАТ (РЫМНИК) хулисемпе çулсен пысăк узелĕсене штурмласа туртса илнĕ.

ФОКШАНЫ хулипе РЫМНИКУЛ СЭРАТ (РЫМНИК) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче танковăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРАВЧЕНКĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн АЛЕКСЕЕВĂН, ШУТОВ полковникăн, КОВАЛЕВ подполковникăн, ПАВЛОВСКИЙ подполковникăн, ОСАДЧИЙ полковникăн танкисчĕсем; ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, СЕМЕНОВ генерал-майорăн, РУМЯНЦЕВ генерал-майорăн, КИНДЮХИН генерал-майорăн, ЗОЛОТУХИН генерал-майорăн, КОНЕВ полковникăн, КАРЛОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВĂН, ЧЕРНОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЦИРЛИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТЮЛЕВĂН, НАСОНОВ полковникăн, ФАДЕЕВ полковникăн, ПОНИМАШ полковникăн саперĕсем; АГАФОНОВ полковникăн, ШЕРВУД полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ФОКШАНЫ хулипе РЫМНИКУЛ СЭРАТ (РЫМНИК) хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «ФОКШАНСКИ» тата «РЫМНИКСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 27-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ФОКШАНЫ хулипе РЫМНИКУЛ СЭРАТ (РЫМНИК) хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ФОКШАНЫ хулипе РЫМНИКУЛ СЭРАТ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1944 çулхи августăн 27-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем паян, августăн 27-мĕшĕнче, пысăк чугун çул узелне тата ДУНАЙ шывĕ çинчи питĕ паха порта ГАЛАЦ хулине туртса илнĕ.

ГАЛАЦ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ШЛЕМИН генерал-лейтенантăн, БОБРУК генерал-майорăн, МАКСИМОВИЧ полковникăн, ПАРФЕНОВ полковникăн, ПРОХОРКИН старши лейтенантăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОРУЧКИНĂН, РУМЯНЦЕВ полковникăн, ГАЕВСКИЙ подполковникăн, БЕЛОВ подполковникăн, ШВЕЦ подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНĂН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКĂН, СЛЕПАКОВ полковникăн, ВОЛОШИН полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИН, СМИРНОВ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, МАЛОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, ЕГОРОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ГАЛАЦ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «ГАЛАЦСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 27-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ГАЛАЦ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ГАЛАЦ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1944 çулхи августăн 27-мĕшĕ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем паян, августăн 28-мĕшĕнче, юхан шыв çинчи пысăк порта, нимĕç захватчикĕсен ДУНАЙ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне—БРАИЛОВ хулине туртса илнĕ.

БРАИЛОВ хулипе портне туртса илессишĕн çапăçна чухне ШЛЕМИН генерал-лейтенантăн, БОБРУК генерал-майорăн, ПАРФЕНОВ полковникăн, МАКСИМОВИЧ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКĂН, СЛЕПАКОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОРУЧКИНĂН, БЕЛОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИН, СМИРНОВ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН саперĕсем; ЕГОРОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, БРАИЛОВ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «БРАИЛОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 28-мĕшĕнче, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, БРАИЛОВ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, БРАИЛОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1944 çулхи августăн 28-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Адмирала ОКТЯБРЬСКИЕ

ХУРА ТИНĔС флочĕн карапĕсемпе десант чăсĕсем, ДУНАЙ шывĕ урлă каçса, ТУЛЬЧА хулипе портне туртса илнĕ тата, тинĕсрен десант антарса, СУЛИНА портне — нимĕç захватчикĕсен Хура тинĕс çинчи питех те паха тинĕс-çар базине йышăннă.

ТУЛЬЧА тата СУЛИНА порчĕсене туртса илессишĕн çапăçнă чухне ГОРШКОВ контр-адмиралăн, I-мĕш рангри капитанăн СВЕРДЛОВĂН, I-мĕш рангри капитанăн ДЕРЕВЯНКĂН, II-мĕш рангри капитанăн ДАВЫДОВĂН, II-мĕш рангри капитанăн ПРОЦЕНКĂН, III-мĕш рангри капитанăн ДЕРЖАВИНĂН, III-мĕш рангри капитанăн КОТОВĂН, I-мĕш рангри капитанăн СОЛОДУНОВĂН морякĕсем; КАТАНОВ майорăн, ГРИГОРЬЕВ майорăн тинĕс пехотин чăсĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКОВĂН, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ полковникăн, КОРЗУНОВ подполковникăн, АВДЕЕВ подполковникăн, ТРУШИН майорăн летчикĕсем; ГРОМОВ контр-адмиралăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ТУЛЬЧА хулипе СУЛИНА хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă флот соединенийĕсемпе чăсĕсене «ТУЛЬЧАНСКИ» тата «СУЛИНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 28-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Хура тинĕс флочĕн паттăр карапĕсемпе чăсĕсене, ТУЛЬЧА хулипе СУЛИНА хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан флот чăсĕсемпе соединенийĕсене, ТУЛЬЧА хулипе СУЛИНА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

*Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.*

1944 çулхи августăн 28-мĕшĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах палăрнă учительсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

1944 çулхи августăн 26-мĕшĕнче Шупашкарта СССР Верховный Совет депутачĕ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ малтан наградăланă учительсен ушкăнне хисеплĕ грамотăсем пачĕ.

Шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР-ĕнчи уйрăмах палăрнă учительсем: хĕрачасен Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорĕ В. С. Сергеева, çак шкулăн учительницисем — Е. Е. Ухватова, Х. К. Железкова, Д. И. Прохорова, хĕрачасен Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорĕ Л. Н. Богатырева, çак шкулăн учительници М. Е. Панишева, арçын ачасен Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн директорĕ Р. В. Ляшко, çав шкулăн учительници Е. П. Петрова, Ф. О. Иванова, Шупашкарти Чапаев поселокĕнчи вăтам шкулăн учительницисем В. А. Богдановская, Т. И. Орлова, Шупашкарти чăваш шкулĕн директорĕ А. Н. Волкова, арçын ачасен Шупашкарти 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учительници К. Н. Запрудная, хĕрачасен Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕн учителĕсем С. Ф. Иванов, С. М. Толмачев, Шупашкар хулинчи çутĕç пайĕн заведующийĕ А. А. Кириллова, ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн кадрсен управленин начальникĕ П. Н. Николаев юлташсем Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене илчĕç.

Награда илнисем хăйсен ĕçĕсене правительство пысăка хурса хакланăшăн чĕререн тав турĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ награда илнĕ учительсене награда илнĕ ятпа саламларĕ, çитес вĕренӳ çулĕнче тата пысăкрах ӳсĕмсем тума сунчĕ.

И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул тултарать

1945 çулта вырăссен питĕ чаплă ученăйĕ, халĕхи экспериментлă медицинăна пуçласа яракансенчен пĕри И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул тултарать. Çак май СССР Сывлăх Халăх Комиссариачĕ Мечников ячĕпе комитет тунă. Комитетăн председателĕ—СССР Сывлăх Халăх Комиссарĕ Г. А. Митерев юлташ, членĕсем—Н. Н. Бурденко, А. И. Абрикосов, Н. А. Орбели академиксем, В. В. Парин, И. П. Разенков, Л. А. Корейша профессорсем тата медицина наукин ытти паллă представителĕсем.

Комитета çав юбилея тивĕçлĕ ирттерме кирлĕ ĕçсене хатĕрлеме хушнă. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Совет государстви çинчен çырнă çĕнĕ кĕнекесем

Оборона Халăх Комиссариачĕн Çар издательстви А. Я. Вышинский академикăн «Советское государство в Отечественной войне» ятлă докладне пичетлесе кăларнă. Çав доклада А. Я. Вышинский Мускаври государство университетĕнче, вырăс наукин пĕтĕм тĕнчери наукăпа культурăна аталантарас ĕçре мĕнле вырăн йышăнса тăнине палăртас шутпа пухнă наукăллă конференцин юлашки ларăвĕнче вуласа панă.

Çак кĕнекере Совет государстви мĕн пирки хăватлă пулни çинчен каланă, государство çинчен Ленинпа Сталин вĕрентнин никĕсĕсене каласа панă.

Кĕнекен пĕр пайĕнче социализмран коммунизма куçнă тапхăрти тата коммунизм вăхăтĕнчи социализмлă государство çинчен Сталин юлташ вĕрентнине каласа панă.

* * *

Çав издательствах А. Горкинăн «В боях закаляется и крепнет дружба народов СССР» ятлă кĕнекине пичетлесе кăларнă.

Минск хулинчи электростанци электричество пама пуçланă

Августăн 24-мĕшĕнче Минск хулинчи электростанци хулари предприятисене, шкулсене тата учрежденисене электричество панă. Çав станцире ĕçлекен çынсем станцие юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленĕ. Вĕсем нимĕçсем сирпĕнтерсе янă темиçе турбо-генератортан пăсăлман пайĕсене илнĕ те вĕсенчен вăйлă генератор туса хунă. (ТАСС).

Хĕрарăмсен аслă шкулĕ уçăлнă

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсен 1-мĕш аслă шкулне — казах хĕрарăмĕсен педагогика институтне вĕренме илесси çинчен пĕлтернĕ. Чĕлхепе литература тата истори факультетне тата физикăпа математика факультетне 90 хĕрарăма илнĕ. (ТАСС).

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ хăçан пуçланать

Пуçламĕш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче хăçан вĕрентме пуçламаллине кăтартса панă.

Кĕçĕн классенче — 1-мĕш класран пуçласа 4-мĕшне çитиччен—сентябрĕн 1-мĕшĕнче, аслă классенче—5-мĕш класран пуçласа 10-мĕшне çитиччен—октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. (ТАСС).

Литва хресченĕн патриотла ĕçĕ

Неман шывĕ патĕнчен чакса кайнă чухне нимĕçсем Литва ССР-ĕнчи Сошила ялĕ çывăхĕнче çулăн пĕр участокне тата кĕпере минăласа хăварнă.

Çав ял çынни Цикота, нимĕçсем мĕн тунине сăнаса тăнăскер, минăсем хурса хăварни çинчен Хĕрлĕ Çарăн чăсĕсене систерме тăрăшнă. Тĕттĕм каç вăл çул çине тухнă та итлеме пуçланă. Часах мотор кĕрлени илтĕнсе кайнă. Пĕр артиллери чăсĕ çапăçу пыракан ял патнелле кайнă. Машинăсем çутă çутмасăр пынă. Вĕсем питĕ хытă пынă. Çав чăсăн командирĕ çул çинче хресчене курнă та машинине чарнă.

Цикота красноармеецсене нимĕçсем минăсем лартса хăварни çинчен каласа панă. Вăл каланă вырăнта вара пирĕн боецсем 80 мина тупса кăларнă. (ТАСС).

Дильшад Ибрагим кызы Муганлинская — Наука академийĕн Азербайджанри филиалĕн зоологи институчĕн директор заместителĕ, вăл биологи наукисен докторĕ ятлă ученăй степене илнĕ пĕрремĕш азербайджанка пулса тăрать.

Ӳкерчĕк çинче: Муганлинская юлташ (сылтăмри) Ругим Али Абас кызы Гаибова аспиранткăна йĕнлантарса парать.

Г. СЕДЫХ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТАН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 26-мĕшĕнче ТАРТУ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса РЫМУ, ТАЙДЛА, МАРАМА, ВАЗУВА, ПУХТАЛЕВА, МЮРИ ятлă ялсене тата ТИКОСЯ, КЯРКНА ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

ВАЛГА хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ВЕРЕВИ, РАННУ, ПАЛУПЭЛНЕ, КОРУСТЕ, ПУКА, ПРИИПАЛУ, ЛОТТА ятлă пысăк ялсем тата ПАЛУПЕРА, ПУКА, МЯГИСТЕ, КЕЕНИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ИЕЛГАВА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

ПРАГА хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сирсе янă, контратакăсем туса, КУЛИГУВ, ЗАЛУБИЦЕ, НОВЕ, ОСТРУВЕК, КОЛАКУВ, ГУЗОВАТКА ХАЙЕНТЫ, ВОЛЯ РАШТОВСКА ятлă ялсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем РОМАН хулинчен хĕвеланăçнелле тата кăнтăралла наступлени туса пынă, БУХУС хулипе ОНЕШТИ хулине туртса, илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — НЕГРЕШТЬ, СЛОБОЗНА, ЗАНЕШТЬ, БОРЛЕШТИ, РЕДИУ СКОРЦЕНИ, МОЙНЕШТИ, БУКШЕШТИ, БЕРЗУНЦ ятлă пысăк ялсем тата ПЯТРА, РОСНОВ, ПОДОЛЕМ, БУХУС, ХЕМЕЮШ, МОЙНЕШТИ, ОНЕШТИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ФОКШАНЫ хулинчен çурçĕртерехре çав фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, АДЖУД НОУА хулипе узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ПОЯНА, ФАНТЫНИ, ТУРГУЛ НИКОРЕШТИ, ПУЦЕНИ ятлă пысăк ялсем.

Августăн 25-мĕшĕнче румынсен 1-мĕш гвардейски дивизийĕ, 8-мĕшĕнче 13-мĕш пехотнăй дивизийĕсем тата 1-мĕш танковăй дивизийĕ Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсене тыткăна парăннă. Унсăр пуçне тата çав фронт çарĕсем 10.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступленне малалла вăйлатса пырса, Украинăри область центрне ИЗМАИЛ хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата ДУНАЙ шывĕн сулахай хĕррине ПРУТ вăрринчен пуçласа ДУНАЙ шывĕн КИЛИЙСКИ ГИРД вăррине çитиччен тăшмантан тасатнă, Измаил облаçĕн район центрĕсене РЕНИ хулипе БОЛГРАД хулине туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем августăн 25-мĕшĕнче тăшманăн 21.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ—нимĕçсем.

КИШИНЕВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем фашистла нимĕç çарĕсен çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлă çапăçнă. Вăйлă çапăçусенче пирĕн çарсем тăшманăн группировкине уйрăм пайсене сапаласа янă, СПАРИЕЦ, ЛОГАНЕШТЫ, ФЫРЛАДАНЬ, САРАТА, ГАЛБЕНА ятлă ялсене туртса илнĕ. Тăшманăн çавăрса илнĕ ушкăнĕсене пĕтерессишĕн пыракан çапăçусем халĕ те пĕтмен-ха.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 86 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 79 самолетне персе ӳкернĕ.

АВГУСТĂН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ВАЛГА хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПИКАСИЛЛА, СОТАГА, УНИКЮЛА, ЦИРГУЛИННА, ИГАСТЕ, КАРУЛА, ХАРГЛА, АПЕ, НАМСАДЫ ятлă пысăк ялсем тата САНГАСТЕ, КАРУЛА, АПЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ПРАГĂРАН хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă, çапăçусенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт атакăланине пула, августăн 27-мĕшĕнче ФОКШАНЫ тата РЫМНИКУЛ СЭРАТ (РЫМНИК) хулисемпе çулсен пысăк узелĕсене штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КОМЭНЭШТИ, ДАРМАНЕШТИ, ТЫРГУЛ ОКНА, ПАУНЕШТИ, ПАНЧУ, ОДОБЕШТИ, ГОЛЕШТИ ятлă пысăк ялсем тата КОМЭНЭШТИ, ДАРМАНЕШТИ, СТЕФАН ВОДĂ, ТЫРГУЛ ОКНА, ПАНЧУ, МЭРЭНЕШТИ, ПУТНА СЯКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Августăн 27-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсене румынсен 4-мĕш горнострелковăй дивизийĕпе 7-мĕш йывăр артиллери полкĕ пĕтĕм составĕпех тата 4-мĕшпе 6-мĕш пехотнăй дивизисен юлашкийĕсем тыткăна парăннă. Унсăр пуçне, фронт çарĕсем 8.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем августăн 27-мĕшĕнче пысăк чугун çул узелĕпе Дунай шывĕ çинчи чи паха порта — ГАЛАЦ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата Прут шывĕн хĕвелтухăç хĕррине Кагул хулинчен пуçласа Рени хулине çитиччен тăшмантан тасатнă, Молдаван ССР-ĕн ВУЛКАНЕШТЫ район центрне тата КИРГАНЫ, ВАНДЫЛУИ ИСАКИ, КОЛИБАШ, ВАЛЕНЫ, СЛОБОДЗЕЯ МАРЕ, КИСЛИЦА ятлă ялсене туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем тăшманăн Кишинев хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлă çапăçнă. Çак группировкăн юлашкийĕсене пирĕн çарсем Менжир ялĕнчен çурçĕртерехри вăрмансенче хупăрласа илнĕ те пĕтерсе пыраççĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн ШПЕЛЬ генерал-майорăн, нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн ЭЙХШТЕДТ генерал-майорăн, нимĕçсен 384-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕн ДЕ-САЛЕНТРЕ ДРАППЕ генерал-лейтенанчĕн виллисене тупнă.

Малтанлăха панă даннăйсем тăрăх, августăн 27-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 10.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче — нимĕçсен 30-мĕш армейски корпусĕн командирĕ инфантери генералĕ ПОСТЕЛЬ, «Ф» ятлă корпусной группăн командирĕ генерал-майор ТРОНЬЕ нимĕçсен 282-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ генерал-майор ФРЕНКИНГ, нимĕçсен 302-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ генерал-майор БОГЕН.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 128 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 89 самолетне персе ӳкернĕ.

„Тырпула пухса кĕртесси вăл—пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕç вăхăтра пухса илтĕн—туянтăн, кая юлтăн—çухатрăн" (Сталин)

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсем вырнă	Капана хывнă	Çапнă
Красноармейски	86,3	21,3	20,2
Калинино	78,6	26,2	17,6
Чурачăк	77,2	34,9	25,8
Çĕрпÿ	76,7	31,8	24,2
Шупашкар	76,4	32,6	22,9
Элĕк	75,9	21,5	17,7
Шăхасан	75,5	21,3	16,2
Муркаш	74,7	25,4	21,1
Вăрнар	73,9	33,8	27,4
Канаш	73,3	35,4	17,9
Сĕнтĕрвăрри	72,8	35,6	24,6
Етĕрне	72,1	36,4	22,1
Ишлей	69,2	26,1	20,7
Чкаловски	69,2	28,3	17,9
Куславкка	68,3	31,9	26,1
Октябрьски	67,7	27,8	20,9
Елчĕк	67,7	27,1	19,1
Сĕнтĕр	67,6	35,6	28,8
Пăрачкав	67,1	49,1	24,4
Хĕрлĕ Чутай	66,5	35,7	27,3
Вăрмар	66,2	31,5	20,7
Комсомольски	65,3	26,9	19,9
Советски	64,3	25,6	21,6
Шăмăршă	64,1	41,0	19,1
Йĕпреç	62,4	34,8	27,1
Тăвай	59,5	27,0	21,3
Çĕмĕрле	58,8	47,5	26,8
Первомайски	56,1	35,5	31,6
Улатăр	52,7	29,9	21,4
Кувакино	50,4	32,0	28,5

* * *

Тырă вырас тĕлĕшпе халиччен хи пекех Красноармейски, Калинино, Чурачăк, Çĕрпÿ, Шупашкар районĕсем малта пыраççĕ. Анчах халиччен пуринчен малта пынă Чурачăк районĕ иртнĕ пилĕккунлăхра хăвăртлăхсене чакарчĕ. Пилĕк кун хушшинче çак район пĕтĕмпе те 5,9 процент çеç ÿсĕм турĕ. Чурачăк районĕн малти вырăна ыттисене парас мар тесен, ĕç хăвăртлăхне ÿстерес пулать. Иртнĕ пилĕккунлăхра Красноармейски районĕ [illegible] хăвăртлăха чакармасăр ĕçлерĕ. [illegible] процент ÿсĕм тунă. [illegible]

Çак вăхăтрах Кувакино, Улатăр, Первомайски, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсем тырă вырас ĕçе начар ирттереççĕ. Иртнĕ пилĕккунлăхра Кувакино районĕ 11,9 процент, Çĕмĕрле 11,1 процент, Первомайски 8,8 процент, Шăмăршă 8,1 процент, Йĕпреç 8,9 процент, Вăрмар 7,6 процент, Чкаловски 6,2 процент çеç ÿсĕм турĕ. [illegible]

Сводка тăрăх кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсем питĕ вăраххăн пыни курăнать. [illegible]

Халĕ уяр кунсем тăраççĕ, уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курса юлмалла, мĕнпур майсемпе вăйсене мобилизацилесе, тырă вырас, кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапса государствăна тырă парас ĕçсен хăвăртлăхне ÿстермелле.

Воскресник ирттерсе, государствăна 2.600 центнер тырă леçнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). ВКП(б) райкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, августăн 27-мĕшĕнче, вырсарникун, хĕрлĕ обозсем организацилесе государствăна тырă парас тĕлĕшпе воскресник пулса иртрĕ. Воскреснике районри пур колхозсем те активлăн хутшăнчĕç. Упи тата Карай ялсовечĕсенчи колхозсем çак кун 85-шер лавлă хĕрлĕ обозсем, Яманак ялсоветĕнчи колхозсем 70-шер лавлă обозсем организациленĕ. Район хатĕрлев пунктне 1.200 лавпа 2.600 центнер тырă леçрĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Графика пур колхозсен те тултарса пымалла

СОВЕТСКОЕ, августăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри 81 колхозран 17-шĕ государствăна тырă памалли графика тăтăшах тултарса пыраççĕ. Лаппракассинчи «Сталинград» колхоз ыраш парса татнă, халь сĕлĕ пама тытăннă. Çапла вара колхоз хăйĕн обязательствине 46 процент тултарнă. Лешкас Асламасри «Коминтерн», Кив Пÿртри «Первое мая» колхозсем те государствăна ыраш парса татнă.

Анчах та хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе питех те вăраххăн ĕçлеççĕ. Ижедеркăри «Ядро» колхоз государствăна тырă пама тытăнманпа пĕрех. Колхоз председателĕ Макарова юлташ каланă тăрăх, кунта лашасем çитмеççĕ. Колхозра 24 лаша пулин те транспорт бригади йĕркеллĕ ĕçлемест. Государствăна мĕнпурĕ те 10 центнер çеç тырă леçнĕ. Çавăн пекех Ямашри «Заря» колхозра та тырă парас тĕлĕшпе ответлăха туйса ĕçлемеççĕ. Вĕсем те 44 центнер кăна леçнĕ. Пĕр сăлтавсăрах сăлтав тупса юлса пыраççĕ. Пĕррехинче колхозниксем Етĕрне хатĕрлев пунктне 11 лавпа тырă леçме кайсан, тырри çăмăрпа йĕпеннĕ те каялла тавăрăннă. Кунта çапнă тырра чылай вăхăт хушши сăвăрмасăр вырттараççĕ, çилпе типĕтмеççĕ. Çавăн пек выртса 500 килограмм ыраша çĕртсе юрăхсăра кăларнă.

Ямашри «Большевик», Кив Тинкешри «Новый путь» колхозсем те графика çуррине çеç тултарса пыраççĕ. Ку колхозсенче транспорт бригадисенчи лашасем ахаллех тăраççĕ, анчах хатĕрлев пунктне тырă леçмеççĕ.

Т. ИВАНОВ.

Тырă йышăнас ĕçе начар организациленĕ

СĔНТЕРВĂРРИ. (Телефонпа). Районри колхозсем, государство умĕнчи парăмсене хăвăртрах парса татса, çĕнтерÿ туса пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшаççĕ. Августăн 15-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинчи графика колхозсем 183,3 процент тултарчĕç. «Заготзерно» склачĕсене колхозсенчен татти-сыпписĕр лавсем килсе тăраççĕ. Анчах та хатĕрлев организацийĕсем тырăпа пыракан колхозниксене тивĕçлĕ пек кĕтсе илмеççĕ-ха. Уйрăм колхозсен хăйсен тыррисене спирт завочĕн склачĕсене пушатмалла. Кунта вара тырра пурĕ те пĕр çĕрте кăна йышăнаççĕ. Иртен пуçласа каçчен 150—200 лав капланса тăрать. Спирт завочĕн склачĕсене тырă пушатакансем валли столовăй та, чей ĕçмелли вырăн та çук. Вĕсем патĕнче агитаторсем те пулмаççĕ.

Тырă паракансем хушшинче калаçусем ирттермелле, хаçатсем вуласа парассине организацилемелле. Анчах та ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ Елистратов юлташ ку тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Ф. ИЛЬИН.

Пур ĕçсене те вăхăтра тăватпăр

Паттăр Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсем пире кунĕн [illegible]

[illegible]

К. Ильина, М. Григорьева колхозницăсем [illegible] нормине 250—275 процент тултарса [illegible]

[illegible]

С. ВАСИЛЬЕВ,
Муркаш районĕнчи Киров ячĕллĕ колхоз председателĕ.
Е. НИКИФОРОВ,
участокăн агрономĕ.

Йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле

Шăмăршă районĕнчи Сталин ячĕллĕ колхозра [illegible]

[illegible] тавраш(?)сем çухалса пĕтеççĕ. Правлени членĕ Морозов вăрмана вутă тиеме кайсан ăна лесник тытнă, Морозов урапине пăрахса хăварнă. Çакăн пек тĕслĕхсем татах та нумай. Колхоз счетоводĕ Р. Якинаберк уйăхне 5 пăт тырă илет, анчах колхоз пурлăхне инвентаризаци тăвасси те тумасть.

Районри организацисем пирĕн колхозри çитменлĕхсем çинчен пĕлеççĕ, çапах та мерăсем йышăнмаççĕ. Колхозри йĕркесĕрлĕх колхозниксене питĕ кÿрентерет.

И. ВОРОБЬЕВ,
Отечественнăй вăрçă инвалидĕ.

„СВОБОДА" КОЛХОЗРА

Хĕвел тухма ĕлкĕреймен-ха. «Свобода» колхоз хирĕнче хĕрÿллĕ ĕç пуçланнă. Кунта виçĕ жнейка ĕçлет, итем çинче — молотилка сасси; çĕрĕпех ĕçленĕскерĕн, унăн сасси ирпе татах та хыттăнрах янраса тăрать. Колхозниксен савăнăçлă калаçăвĕ машинăсен сассипе пĕрлешет. Пурте васкаççĕ вĕсем. Машинăпа вырнă тулла çыхса пуçтараççĕ, унăн тепĕр хĕрринче çурлапа выраççĕ, çавасемпе çулаççĕ.

Кунти колхозниксем — ватти те, çамрăкки те — пур ĕçе те вăхăтра, тĕплĕн тума юратаççĕ.

— Иртнĕ çул та начар мар ĕçлерĕмĕр, паянхи кун та ав кивĕ тулă çăкăрне çиетпĕр, — хавхаланса сăмах хушать колхоз председателĕ коммунист Петровский юлташ.

— Ыраш хăçан вырса пĕтернине маннă та ĕнтĕ пирĕн колхозниксем, 241 гектара эрне хушшинче пухса кĕртрĕмĕр. Çуртырисене те тепĕр икĕ кунтан пĕтеретпĕр,— тет вăл.

Çулăн тепĕр енче вырса пĕтереймен 10 гектар сĕлĕ ани сарăлса выртать. Çÿлĕшĕпе те çÿллĕ те, тасалăхĕ вара — куçа алчăраттарать: пĕр çумкурăк та курăнмасть. Ку, паллах, çураки вăхăтĕнче кирлĕ пек таран сухаласа, таса вăрлăха сеялкăпа акса хăварнине, çумкурăксене пуян пурнăçшăн тăрăшакан колхозник алли тасатнине кăтартать. Çавăнпа ку пуян уйхир çине куçусем килениччен пăхас килет. Тулли пĕрчĕллĕ сĕлĕ шерепи пуçне кăштах çĕрелле уснă та ирхи çилпе хумханса ларать. Пучахсем çийĕнче хĕвел шевли вылять. Кунпа мар, сехетпе те мар, минутăпа кĕтет кашни пучах хуçи пырса пуçтарасса. Хуçи ун — колхозник—ватти те, çамрăкки те. Вĕсем те васкаççĕ. Хире ирхи апатпа пыриччен вĕсем ав темиçе хут тар кăларма ĕлкĕрнĕ.

— Ытла та хĕвел хытă хĕрте пуçларĕ, ахăртнех çанталăк пăсăлать... васкас, ачсемĕр, васкас! — пĕрне пĕри хистеççĕ кĕлте çыхакансем. Кусем — 5-мĕш бригадăри колхозниксем. А. Николаева, Н. Тихонова, фронтовик арăмĕсем Н. Берендеева, М. Румянцева кулленхи нормăна 200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Пире хирĕç сылтăм хулпуççи урлă сăран сумка çакнă, тулли питлĕ çап-çамрăк хĕр тухса тăчĕ. Ку вăл комсомолка Краснова юлташ — Хĕрлĕ ялавлă 5-мĕш бригадăн бригадирĕ. Вăл кунĕпех хирте: колхозниксене уйрăм участоксем вырма виçсе парать, тунă ĕçе йышăнать, ĕçкунĕсем шутласа парать. Бригадăри колхозниксем ун çинчен юратсах вара: «Пирĕн бригадир хăçан выртса канать-ши?», тесе калаççĕ. Чăнах та, ватăрах колхозниксем кунĕпе хĕрсе ĕçленĕ хыççăн çĕрле канаççĕ, çамрăксем вара çĕрле те ĕçлеççĕ. Колхоз счетоводĕ Семенова, вулав çуртĕн заведующийĕ Васильев комсомолецсем, кооперацире, сельсоветра, почтăра ĕçлекенсем Кириллов, Любимова юлташсем—пĕтĕмпе 30 çынна яхăн, партин колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарĕ, вăлах шкул директорĕ Николаева юлташ ертсе пынипе, кашни каç вырма, кĕлте çыхма хире тухаççĕ. Хĕрсе ĕçлеççĕ, каннă вăхăтра хут купăс кĕввипе ташăсемпе юратнă юрăсем янăраççĕ. Çамрăк бригадирсем — Красновăпа И. Любимова та çавăнтах. Ире хирĕç çеç вĕсем куç хупса илеççĕ те сар хĕвел вăраниччен колхозниксене каллех ĕçе ертсе тухаççĕ. Çавăн пек килĕшет те ĕнтĕ вăл çамрăк çынна: савăнма та вăхăт туп, ĕçре те малта пыр.

Иртнĕ каç та авă çамрăксен ударлă группи, жнейкăпа вырса пăрахнă 17 гектар сĕлле çыхса, сурата купаланă. Кăвак çут килсен канма çеç ларнăччĕ, пĕри вĕсенчен яланхи пекех: — Кузьма пичче килет! — тесе кăшкăрса ячĕ.

Кузьма Спиридонович Майков — колхоз хуралçи. Вăл çулсеренех колхоз тыррине, акса ÿстерсе, пуçтарса пÿлмене кĕртсе пĕтериччен, тÿррĕн те тĕплĕн сыхлать. Çамрăксене ĕçре вĕрентет, хăй ватă пулсан та, çамрăксем хушшинче шÿт тума, юмах яма юратать; çамрăксем ăна кирек-хăш вăхăтра та хапăлласа кĕтсе илеççĕ. Вăл çамрăксем патне çитрĕ те:

— Ну, кам ывăннă, çавна малтан ташлама тивет! — терĕ. Хăй çавăнтах çĕрĕпе хир тăрăх çÿресе çемçелнĕ урисене хытăрах тытма тăрăшса гармонистсене «Спиридонăч» кĕввине выляма систерчĕ.

Колхоз пур ĕçе те планпа туса пырать. План тăрăх 241 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 7 кун хушшинче вырса пуçтарма палăртнă пулнă, çав плана ăнăçлăн пурнăçланă. Çавăн пекех 405 гектар çинчи çурхи тырăсене те 12 кун хушшинче вырса пĕтереççĕ. Вырнă тырăсене итеме кÿрсе, сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпе çапса пĕтерме палăртнă. Малтанхи çапнă тырра государство, Хĕрлĕ Çар валли леçме ятарласа транспорт бригади уйăрнă.

—Иртнĕ çул эпир государствăна планран ирттерсе 80 центнер сутрăмăр, — каласа параççĕ колхозниксем.—Кăçалхи çул та начар мар ĕçлетпĕр, эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илесси куç умĕнчех.

Колхоз ĕçĕнчи мĕнпур ответлă участоксенче колхозниксене ялти коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Вĕсемех колхозниксем хушшинче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Колхозри 15 агитатор, колхозниксемпе пĕрле хирте ĕçлесе, каннă вăхăтра вĕсене хаçатсемпе кĕнекесем вуласа параççĕ. Бригадăпа бригада, колхозникпе колхозник хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, унăн результачĕсене хĕрлĕ хăма çине тата боевой листоксене çырса пур колхозниксене те пĕлтереççĕ.

Паян «Свобода» колхозри колхозниксем çĕнĕ чаплă хыпар илтрĕç. Вĕсем патне радио панă хыпарсене итленĕ учительница Ирина Ивановна Иванова, аллине пĕчĕк хут тытса, чупса пычĕ:

— Пур фронтсенче те вăйлă çапăçусем хыççăн Хĕрлĕ Çар татах та малалла кайнă. Молдаван ССР-ĕн столицине Кишинев хулине ирĕке кăларнă, Румынире нумай малалла кайнă та çĕршер ялсемпе вуншар чугун çул станцисене нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă. Тата çĕнĕ хыпар, юлташсем. Кăçалхи çураки ĕçĕсене ăнăçлă туса ирттернĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн пире Чăваш АССР Совнаркомĕ хăйĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă!

Ирхи апатченех тар юхтарса ĕçленĕ колхозниксем, савăннипе, пĕрин хыççăн тепри тухса калаçма пуçларĕç.

— Ĕçре ывăннине туймастăп, — тет 74 çулхи П. Берендеев юлташ, — манăн икĕ ывăл тăван çĕршывшăн фронтра çапăçаççĕ. Эпĕ ватă пулсан та хал çитнĕ таран ĕçлетĕп, ĕçре çамрăклиннине туятăп. Тăшмана тĕппипех çапса салатсан хаклă ывăл-хĕрсем киле таврăнас вăхăт нумай юлмасть. Тата вăйлăрах ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара ытларах тĕштырă туса парса, тăвансем киле çитес куна çывхартар!

«Свобода» колхозри колхозниксем хăйсен сăмахне ĕçпе пурнăçлаççĕ. Августăн 23-мĕшĕ тĕлне 400 центнер, вĕсенчен 171 центнер Хĕрлĕ Çар фончĕ валли, ырашпа тулă государствăна леçнĕ.

Вас. ЛЮБИМОВ.
Муркаш районĕнчи «Свобода» колхоз.

Румынири лару-тăру

ЖЕНЕВА, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхине Бухарестри радио çапла пĕлтернĕ:

«Паян нимĕçсен пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем Бухарест çывăхĕнчи Бэнеасри аэродрома йышлăн тапăннă хыççăн ăна нимĕç çарĕсем тытса илме хăтланнă. Король гвардийĕн полкĕсем тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, нимĕçсене питĕ пысăк çухату тÿстернĕ. Германин йывăр бомбардировщикĕсемпе машинисем Бэнеасран Бухареста каякан çулсем çинче капланса тăнă. Бэнеас ялĕ тата аэродром пирĕн алла куçнă. Çапла вара столицăна нимĕç чаçĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă, çав чаçсенчен нумайĕшне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Юлашки хыпарсем тăрăх, нимĕçсен Румынири çирĕплетнĕ юлашки пункчĕсем пирĕн алла куçаççĕ. Германи салтакĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе хĕçпăшалĕсене пăрахса тыткăна паранаççĕ.

ЖЕНЕВА, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кăнтăрла Бухарестри радио çакăн пек пĕлтерÿ панă: Румынире пĕтĕм çĕршывĕпех Санатеску генерал правительстви хуçа пулса тăрать, нимĕçсен чаçĕсене пурне те тенĕ пекех хĕçпăшалсăрлантарнă, вĕсене ниçта куçма памасăр тытса тăраççĕ. Нимĕçсен хирĕç тăракан юлашки ушкăнĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Бухарест хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, столица кирек мĕнле атакăна та сирсе яма хатĕр тăрать. Малалла пĕлтерÿре çапла каланă: нимĕçсем, тен хăйсен аллинчи сахал самолетсем, пе усă курса, Бухарест çине бомбăсем пăрахма хăтланĕ. Румынсен çарĕ, союзниксен верховнăй командованийĕ пулăшнипе, çавна хирĕç тивĕçлипе кĕрешĕ.

Çĕнĕ правительство, премьер-министр генерал Константин Санатеску председатель пулса ертсе пынипе, темиçе лару туса ирттернĕ. Çав ларусенче портфельсĕр министрсем, нациллĕ-демократиллĕ блока кĕрекен партизан представителĕсем те пулнă. Халь тумалли ĕçсем çинчен сÿтсе-явнă, столицăри тата çĕршывăн ытти центрĕсенчи йĕркеллĕ пурнăçа хÿтĕлесе тăма кирлĕ ĕçсем тунă.

Румынин генеральнăй штабĕ пĕлтернисем

БУХАРЕСТ, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио пĕлтернĕ тăрăх, Румынин çарĕн генеральнăй штабĕн паян пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: августăн 24-мĕшĕнче нимĕçсен чаçĕсем Бухарест хулине атакăлама пуçланă. Августăн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче нимĕçсен авиацийĕ Бухарест хули çине бомбăсем питĕ нумай пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Нимĕçсен 7 самолетне персе ÿкернĕ. Августăн 25-мĕшĕнче румын чаçĕсем Бухареста хирĕç тăнă нимĕçсен ушкăнĕсене пĕтерсе тăкнă. 4.000 çынна тыткăна илнĕ тата трофейсем нумай тытса илнĕ. Румын çарĕсем столица таврашĕнче нимĕçсен пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă ушкăнĕсене пĕтерсе пынă.

* * *

ЖЕНЕВА, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине ирех Бухарестри радио ĕнер пулса иртнĕ вăрçă ĕçĕсем çинчен Румынин генеральнăй штабĕ пĕлтернине панă.

Пĕлтерÿре çапла каланă: столицăра çаплах тăшманăн хирĕç тăракан пысăк ушкăнĕсене пĕтерсе пынă. Тăшманăн пысăк вăйĕсем столицăна тапăнма пынă, Румыни çарĕсем, контратакăсем туса, тăшман аллинче тăракан вырăна çавăрса илес тĕлĕшпе çитĕнÿсем тунă. Пĕчĕкленсе юлнă плацдармра тăшмана пур енчен те хĕснĕ, унта тăшман çарĕсене пĕтерсе тăкасси куç умĕнчех тăрать.

Англипе Америка авиацийĕн пысăк вăйĕсем румынсен çарне наступлени тума пулăшса пынă, вĕсем çапăçăва хăйсен 400 бомбардировщикĕпе истребительне кĕртсе янă. Нимĕçсем хăйсен çарĕсене пулăшма Бухареста Джурджу хули тĕлĕнче Дунай шывĕ урлă каçнă пысăк вăйĕсене илсе пыма хăтланнă. Румыни çарĕсем, вăйлăн хирĕç тăрса, Джурджу хулине пырса кĕнĕ тăшман çарĕсене Дунай шывĕнчен кăнтăралла хăваласа янă. Тăшман авиацийĕ Бухарест хулине атакăланă, культура учрежденийĕсене çĕмĕрнĕ, граждăнла халăха вăйлă сиен кÿнĕ. Германипе Венгри çарĕсем, тăшман оккупациленĕ Трансильванире тăракан çарсем пулăшнипе, «Румыни» ятлă радио саракан станцие туртса илме хăтланнă, анчах тăшман атакисене пурне те сирсе янă.

РУМЫНИРИ ПОЛИТИКАЛЛĂ ПАРТИСЕМ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЖЕНЕВА, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Бухарестри радио Румыни халăхне чĕнсе каланине панă. Çав чĕнÿре Румыни халăхне, таччăн пĕрлешсе, гитлерла Германие хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Çав чĕнĕве политикăллă тăватă партин представителĕсем алă пуснă. Çак партисем корольпе Румынин наци пĕрлĕхĕн правительствине пулăшса тăракан нациллĕ-демократиллĕ блок туса тăраççĕ. Чĕнÿре çапла каланă: «Пирĕн халăх хăйĕн историйĕнчи чи йывăр сехетсене пурăнса ирттерет. Пирĕн иртнĕ ăрусем тунă пурлăх тата пулас ăрусен мĕнпур шанчăкĕсем хăрушлăхра тăраççĕ. Вăрçă пĕтес патне çитсе пырать. Германи ишĕлет. Нимĕçсен пур çарĕсем те поражени тÿсеççĕ. Союзниксем çĕнтересси куç умĕнчех тăрать. Çакăн пек лару-тăрăва шута илсе тата Молотов каланине асра тытса (Молотов Румыние никама пăхăнман государство туса хума сăмах панă; вăл каланине вара Рузвельт президентпа Черчилль премьер-министр та ырланă), эпир хамăр çĕршыва çитес мирлĕ конференцире аяла пулнă государствăсем хушшинче тăмалла мар майсем тупса патăмăр. Пилĕк çул хушши вăрçнă хыççăн тавăру сехечĕ çывхарса килет. Мир тунă вăхăт тĕлне пирĕн хамăр чикĕсене пăснă, пирĕн ирĕклĕхпе сутă тунă нимĕçсем хушшинче пулмалла ан пултăр. Гитлеризмпа килĕшсе ĕçленин йĕрĕсемпе паллисене эпир хамăр çирен çуса тасатмалла, çапла вара пирĕн хамăра шанчăклă малашлăх паракан çул çине тăмалла.

Нимĕç сутăнчăкĕсене хирĕç пыракан юлашки çапăçура пурте пĕрлешĕр. Нимĕçсем вĕсем хăйсем панă сăмаха пăсрĕç, вĕсем пирĕн тăван çĕршыва хирĕç тăшман пулса тухрĕç. Кашни нимĕç салтакĕнчен кирек ăçта та, кирек мĕнле пулсан та унăн хĕçпăшалне туртса илĕр, нимĕçсене пирĕн тăван çĕршыв пуянлăхне пĕтерме ан парăр. Вĕсен çар соединенийĕсем те, уйрăм çыннисем те пирĕнпе вăрçма ан пултарччăр. Вĕсенчен пирĕнпе вăрçмалли пур майсене те туртса илĕр, вĕсене пирĕн тăван çĕршывран хăвăртрах тухса каймалла тăвăр».

Чĕнĕве çаксем алă пуснă: националцаранистсен партийĕ ячĕпе Юлий Маниу, национал-либералсен партийĕ ячĕпе К. И. Братиану, коммунистсен партийĕ ячĕпе Лукреций Патрашкану тата социал-демократсен партийĕ ячĕпе К. Т. Петреску.

Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Парижа августăн 25-мĕшĕнче ирхине французсен 2-мĕш бронетанковăй дивизийĕ кĕнĕ хыççăн унта союзниксен бронетанковăй вăйĕсемпе пехоти кĕнĕ.

Парижран кăнтăртарахра тăшман Вильнев, Сен-Жорж, Корбей пункчĕсем хушшинче Сена шывĕн хĕвелтухăç çыранне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Тăшман Монтаржăран çурçĕр-хĕвелтухăçнелле чакать. Союзниксен патрулĕсем Труа хулинчен хĕвелтухăçнелле нумай кайнă. Союзниксен çарĕсем Эльбер хулине ирĕке кăларнă, вĕсем çав пунктпа тинĕс хушшинче хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, Сена шывĕ патне çывхарса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем нумай тĕлте Риль шывĕ урлă каçнă та халь çав шывăн икĕ çыранне те Монфорсюр-Риль пунктне çитиччченех хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Англипе Канада чаçĕсем Америка чаçĕсемпе пĕрлешнĕ.

Союзниксен çарĕсем Брест хулине çĕр çинчен те, сывлăшран та, тинĕсрен те атакăланă. Августăн 25-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата августăн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вăтам тата йывăр бомбардировщиксем тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсене, çав шутра арсеналне те пыра-пыра тапăннă. Тинĕсрен тăшманăн çыранри оборона батарейисене тата уйрăм объекчĕсене пенĕ.

* * *

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен хĕвелтухăç еннелле Сена шывĕн тури тăрăхĕ патнелле куçса пыракан çарĕсем Трум хулин çурçĕр хĕрри патĕнче, çавăн пекех тата унтан 12 милл çурçĕртерехре Сена шывĕ çине тухнă. Кунтан Париж патнерех союзниксен бронетанковăй чаçĕсем тăшмана Мелэн пункчĕпе Корбей пункчĕ хушшинчи секторта атакăланă. Кунта союзниксем тăшмана атакăлама малтанах плацдарм хатĕрлесе хунă пулнă. Парижра тăшманăн 10.000 салтакĕпе офицерне яхăн, вăл шутра нимĕçсен командующийĕпе унăн штабне, тыткăна илнĕ. Париж хулин кăнтăр-хĕвелтухăç хĕрринчи Шампиньире тăшманăн пĕр узелĕ çаплах хирĕç тăрать-ха. Париж хулин çурçĕр-хĕвелтухăç тата çурçĕр-хĕвеланăç хĕррисенче тăшманăн пĕчĕк ушкăнĕсем кăна кĕрешеççĕ. Хулара хăйĕнче, официальнăй йĕркепе илсен, тăшман хирĕç тăрасси пĕтнĕ, анчах та ним тĕлли-паллисĕр перкелешни халĕ те чарăнман-ха. Мант-Гассикурпа Париж хушшинчи секторта Сена шывĕн кăнтăр хĕррипе малалла куçса пыракан бронетанковăй чаçсене хирĕç тăшман вăйлă тăмасть. Союзниксен çарĕсем Сена шывĕн кăнтăр хĕрринче пĕрлешнĕ те Вернонпа Пон-де-Ларш районĕнче Сена шывĕ урлă каçса кайнă. Кунтан хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Бур-Тарульд ятлă пункта туртса илнĕ, халĕ Лонд вăрманне тăшмантан тасатаççĕ. Çыран секторĕнче тăшмана Риль шывĕн анат тăрăхĕнчи районран хăваласа кăларнă. По-Одемер хули союзниксен аллинче. Бретаньре Брест хулинчен çурçĕртерехри районра хаяр çапăçусем пуçланса кайнă, кунта тăшман гарнизонĕ хытă хирĕç тăрса çапăçать. Пирĕн йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, каллех тăшманăн Брест хулинчи артиллери позицийĕсемпе укреплениĕсене тапăннă. Пирĕн бомбардировщиксем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Истребитель-бомбардировщиксемпе истребительсем Çурçĕр Францире, Бельгире тата Голландире тăшман транспортне атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ИТАЛИ ЧИККИ ПАТНЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, официально çапла пĕлтернĕ: союзниксен çарĕсем Итали чиккине çитнĕ. Кăнтăр Францие пĕтĕмпе тенĕ пекех ирĕке кăларнă.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ПАРИЖРА

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри радио саракан компанийĕн представителĕ Парижран çакăн пек хыпар панă: Парижа Эйзенхауэр генерал çитнĕ. Вăл ирĕке кăларнă Париж хулине пăхса тухнă та Париж хулин çар губернаторĕ Кениг генерал патне пырса кайнă.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛА ВĔЛЕРМЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижа килнĕ де Голль генерала ĕнер вĕлерме тапăннă. Де Голль генерал Парижри турă амĕш соборĕнче савăнăçлă молебенра пулнă. Собора фашистсем те кĕрсе кайнă. Çавсем галерейăран Де Голль генерала тата молебен тăвакан духовенствăна пеме тытăннă. Француз полицейскийĕсемпе союзниксен çарĕсен салтакĕсем фашистсене хирĕç пеме пуçланă. Де Голль генерал пĕр сиен те курман, сывах юлнă.

Болгарири ĕçсем

СОФИЯ, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Софири радиостанци Софи хулинче çапла пĕлтернĕ:

Болгари халăхĕ аслă государствăсене хирĕç вăрçасшăн мар. Болгари халăхĕн çак кăмăлне пурнăçа кĕртме кансĕрлекен мĕнпур сăлтавсене сирсе яма йышăннă. Çак решение пурнăçлас майпа Болгари правительстви Болгарипе вăрçăллă шутланса тăракан çĕршывсемпе çыхăннă. Çакăн çинчен вăл Совет Союзне те пĕлтернĕ. Болгари правительстви çапла каланă: Болгари ытти çĕршывсем тĕлĕшпе малашне çирĕп нейтралитет тытса тăрать, тенĕ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă тĕлĕшпе çирĕп нейтралитет тытса тăрас шутпа, вăл çапла каланă: Болгари территорине пырса кĕрекен ют çĕршыв çарĕсене пурне те хĕçпăшалсăрлантаратпăр, тенĕ.

Çак решение пурнăçа кĕртсе пырса, Германин Болгари территорине кĕнĕ çарĕсене халь хĕçпăшалсăрлантарнă.

Хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли закона пурнăçлани çинчен Рузвельт тунă отчет

ВАШИНГТОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли закона пĕр квартал хушшинче мĕнле пурнăçлани çинчен конгреса отчет тăратнă. Çав отчетпа пĕрле янă çырура Рузвельт çапла калать: «Хĕçпăшалпа кивçен е арендăна памалли закон тăрăх эпир союзниксене виçĕ уйăх хушшинче (1944 çулхи июнĕн 30-мĕшĕччен) 4 миллиард та 45 миллион долларлăх материал тата пулăшу панă, çапла вара, çав закона пурнăçланă май, пĕтĕмпе 28.270 миллион доллар пĕтернĕ».

Çырура малалла çапла каланă:

«Японипе Германи пĕр условисĕрех парăниччченех пирĕн хĕçпăшала кивçен е арендăна кирлĕ таранах парса тăмалла, çакна пирĕн мĕнпур пĕрлешÿллĕ нацисен пĕрлештернĕ хăвачĕ тăшмансеннинчен ытларах тата, май килнĕ таран, усăллăрах пултăр тесе тумалла. Эпир халь çакна пĕлетпĕр: хамăр хăвата пĕрлештерсе, эпир тăшмана татăклăн çĕнтерес куна çывхартма пултаратпăр. Эпир тата çакна пĕлетпĕр: пĕрлĕхе сыхласа хăварсан çеç эпир тĕреслĕхлĕ тата çирĕп мир тума пултаратпăр».

ДУМБАРТОН-ОКС ХУЛИНЧИ КОНФЕРЕНЦИРЕ

ВАШИНГТОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Думбартон-Окс хулинче малтанхи эрнере «пур виçĕ ушкăнне те пĕтĕмĕшле шухăшĕсене палăртса тухнă». Августăн 26-мĕшĕнче çавăн пекех тата çапла пĕлтернĕ: малалли калаçусене эрнере туса ирттерме кирлĕ материалсене хатĕрлесе хума Стеттиниуса, Громыкăна тата Кадогана кăштах вăхăт кирлĕ пулать, çавăнпа та августăн 26-мĕшĕпе 27-мĕшĕнче делегатсен канашлăвĕ пухăнмасть.

Паян ирхине Хэлл ĕçре ертсе пыракан республиканецсемпе демократсене—сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн членĕсене пухнă.

Хаçатсем конференци çинчен официальнăй йĕркепе çырнă кĕске пĕлтерÿсем кăна пичетлеççĕ тата кăштах паллăрах вак-тĕвексене сутатса параççĕ, анчах та вĕсем мĕне пĕлтернине уçса памаççĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах хаçатсем çирĕплетсе паман тĕрлĕ хыпарсем пичетлесе кăлараççĕ. Ку хыпарсене хаçатсем тĕрлĕрен официальнăй çынсем хăйсен ячĕпе панă пĕлтерÿсенчен илеççĕ пулмалла.

САМОЛЕТ-СНАРЯД АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнь уйăхĕн варринчен пуçласа (самолет-снарядсем Англие çав вăхăтра тапăнма пуçланă) август уйăхĕн виççĕмĕш эрни пĕтиччен нимĕçсем Кăнтăр Англи çине 7.250 самолет-снаряд вĕçтерсе янă.

КĔСКЕН

* Гитлерла оккупантсем Итали Джульяно хулине ним юлмиччен çунтарса янă. Вĕсем ăна Джульяно халăхĕ хăйсем çине тăшманла пăхнă пирки çавăн пек тискеррĕн çунтарса янă.

* Вăрçă пуçланнăранпа Лăпкă океанра Америкăн подводнăй лодкисем Япони 706 суднине путарнă.

* Пĕрлешÿллĕ Штатсенче 27.000 тонна таякан авианосеца тата 13.000-шер тонна таякан икĕ крейсера туса пĕтерсе шыва антарнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паянпа ыран
(августăн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче)

ЮЛАШКИ ХУТ
историллĕ, илемлĕ çĕнĕ фильм
«ГЕОРГИЙ СААКАДЗЕ»
(иккĕмĕш сери)
кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме тытăнать.

Чăвашсен музыка тата художество училищисене вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисене халь те йышăнаççĕ.

Çав училищĕсене 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Чăвашсен государство академи театрĕ çумĕнчи драма студине (икĕ çул вĕренмелли чăваш тата вырăс отделенийĕсене) вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Чăвашсен Саратоври государство консерваторийĕ çумĕнчи опера студине 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене, чăвашла калаçма пултараканнисене илеççĕ.

Вĕренме илнисене 150 тенкĕрен пуçласа 250 тенке çитиччен стипенди параççĕ, общежитие вырнаçтараççĕ, 2 мĕш категорири рабочисемпе тан снабжени параççĕ.

Студире тата училищĕсен аслă класĕсенче вĕренекен студентсене вĕреннĕ вăхăтра Хĕрлĕ Çара илмеççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Дом Советов, Управление по делам искусств при СНК Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00656 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л, Тираж 16.000 экз,